27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ОКТЯБРЬ
10
ЫТЛАРИКУН
200(6695) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне БАГРАМЯНА

БАЛТИКА ТĂРĂХĔНЧИ 1-мĕш фронт çарĕсем, БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем пулăшнипе, ШАУЛЯЙ (ШАВЛИ) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçри тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районран наступлени пуçласа янă та тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татса кĕнĕ, тăватă кун хушши çапăçса тапăнса пырса, 100 километр таран малалла кайнă, татса кĕнĕ вырăна фронт тăршшĕпе 280 километр таран аслăлатнă.

Наступлени тунă вăхăтра фронт çарĕсем нимĕçсен оборонин ТЕЛЬШАЙ, ПЛУНГЯНЫ, МАЖЕЙКЯЙ, ТРИШКЯЙ, ТИРКШЛЯЙ, СЕДА, ВОРНИ, КЕЛЬМЫ ятлă тĕреклетнĕ паха пунктĕсене тытса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 2.000 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ПАПИЛЕ, ПИЕВЕНАЙ, НЕВАРЕНАЙ, НАРИМДАЙЧАЙ, РАУДЕНА, КУРШЕНАЙ, КУРТОВЯНЫ, ШАВКЯНЫ, ВИТСОДЗИ, ЛУКНИКИ, ЯНОПОЛЬ, ЖОРАНЫ, МЕДЫНГЯНЫ, ТВЕРЫ, ПОВАНДЕНИ, ЮЗЕФОВ, УЖВЕНТЫ, КОЛТЫНЯНЫ, КРОЖИ, САВДЫНИКИ, ИОЗЕФОВО, СТУЛЬГИ, БАРГАЙЛИ, НЕМОКШТЫ, РЕТОВО, ИЛАКЯЙ, ДЕРВЯНЫ, КОВНАТОВО, ЖЕМАЛЕ, ВЕШВЯНЫ, ЛЕПЛАВКИ, ЭЙГИРДЖЯЙ, ЭЛКИ, ЭРЖВИЛКИ, ВОДЖГИРЫ.

Тăшман оборонине татса кĕнĕ чухнехи çапăçусенче ЧИСТЯКОВ генерал-полковникăн, БЕЛОБОРОДОВ генерал-лейтенантăн, ЧАНЧИБАДЗЕ генерал-лейтенантăн, КРЕЙЗЕР генерал-лейтенантăн, ЛЮДНИКОВ генерал-лейтенантăн, ФЕДЮНЬКИН генерал-майорăн, ЕРМАКОВ генерал-лейтенантăн, ЛОПАТИН генерал-лейтенантăн, КСЕНОФОНТОВ генерал-лейтенантăн, АРУШАНЯН генерал-майорăн, САМАРСКИЙ генерал-майорăн, ИБЯНСКИЙ генерал-майорăн, ЧЕРНИКОВ генерал-майорăн, СЕДУЛИН генерал-майорăн, МИССАН генерал-лейтенантăн, НЕВЕРОВ генерал-майорăн, БЕЗУГЛОВ генерал-лейтенантăн, ОЛЕШЕВ генерал-майорăн, МАКАРЬЕВ генерал-майорăн, КУЧЕРЯВЕНКО генерал-майорăн, БЕЛЯЕВ генерал-майорăн, ДРУЖИНИН полковникăн, ЕРЕМЕНКО генерал-майорăн, КУДРЯВЦЕВ генерал-майорăн, ГОРБАЧЕВ генерал-майорăн, ПРЯХИН полковникăн, ГРЫЗЛОВ генерал-майорăн, ЛОЖКИН полковникăн, ВЛАСОВ генерал-майорăн, МАЙКОВ, полковникăн, СТАНКОВСКИЙ генерал-майорăн, СИВАНКОВ полковникăн, СОБЯНИН полковникăн, КВАШНИН генерал-майорăн, БИБИКОВ полковникăн, КОЖАНОВ полковникăн, ПОПОВ полковникăн, КЛЕЦ полковникăн, УРБАШ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн ХЛЕБНИКОВĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн БАЖАНОВĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн НИЛОВСКИН, артиллери генерал-лейтенанчĕн МАКАРОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ЩЕГЛОВĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн СТРЕЛЬБИЦКИН, артиллери генерал-майорĕн ТЕЛЕГИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ДЕРЕШĂН, артиллери генерал-майорĕн БЕЛЯКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн САМБОРСКИН, артиллери генерал-майорĕн СТЕПАНЕНКĂН, ЧВИКОВ полковникăн, КАПИТОНЕНКО полковникăн, ЛЕБЕДЕВ полковникăн, ЧАПЛИН полковникăн, ЖЕЖЕРУК полковникăн, ГАЙДУКОВ полковникăн, МИРОНОВ полковникăн, КУЗНЕЦОВ полковникăн, СКВОРЦОВ полковникăн, артиллери генерал-майорĕн КАРСАНОВĂН, ДОЛГОВ полковникăн, ЛУКЬЯНОВ полковникăн, ЛИНЬКОВ полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ВАСИЛЬЕВĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ВОЛЬСКИН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн СКОРНЯКОВĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ГУТКОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн МАЛАХОВĂН, ВОЛКОВ полковникăн, КОЛЕСНИКОВ подполковникăн, ПАРАМОНОВ полковникăн, САДОВСКИЙ полковникăн, БЕРЗИН полковникăн, БАТАЛКИН полковникăн, ФЕШЕНКО полковникăн, АРХИПОВ полковникăн, КУТУЗОВ полковникăн, ХРАПОВИЦКИЙ полковникăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн ЛИПАТОВĂН, МЕНЬШОВ полковникăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн ЮДИНĂН, СТАНИСЛАВСКИЙ полковникăн, ПОКОЛОВ подполковникăн, ДОЛГАНОВ полковникăн, ЕРМАКОВ полковникăн, КАЛИНИН подполковникăн, БЕСПАЛОВ полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ПАПИВИНĂН, АЛЕКСАНДРОВ полковникăн, КУЧМАН полковникăн, авиаци генерал-лейтенанчĕн ФИЛИНĂН, КУРБАТОВ полковникăн, авиаци генерал-майорĕн ИВАНОВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн БЕЛЕЦКИН, ПЛАХОВ полковникăн, ГРАЩЕНКО полковникăн, СТАЛИН полковникăн, авиаци генерал-майорĕн КИТАЕВĂН, ФОКИН полковникăн, РЫКАЧЕВ полковникăн, СРУЛИК полковникăн, РЫБАКОВ подполковникăн, ПРУТКИН полковникăн, КАРЯКИН подполковникăн, ЧУЧЕВ полковникăн, авиаци генерал-майорĕн МОЛОКОВĂН летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн КОСАРЕВĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн КУЛИНИЧĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн КОЛМАНОВĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн БРЫНЗОВĂН, КУЗНЕЦОВ подполковникăн, СТЕЧИШИН полковникăн, КУЧЕРУК полковникăн, КОРОТКОВ полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн БАБКИНĂН, çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн БОРОВЯГИНĂН, ЗАХАРОВ полковникăн, çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн, КОКОРИНĂН, çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн СОРОКИНĂН, НИНИН полковникăн, КОВАЛЕНКО полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, тăшман оборонине татса кĕнĕ чухнехи çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсĕсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, октябрĕн 8-мĕшĕнче, 22 сехет те 30 минутăра пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Балтика тăрăхĕнчи 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, нимĕçсен оборонине татса кĕнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, нимĕçсен оборонине татса кĕнĕ чухнехи çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕ.

Великобритани Премьер-министрĕ У. Черчилль господин тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ А. Иден господин Мускава килни

Октябрĕн 9-мĕшĕнче Мускава Великобритани Премьер-Министрĕ Уинстон Черчилль господин тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен министрĕ Антони Иден господин килнĕ. Вĕсемпе пĕрле Британи Империйĕн Генеральнăй Штабĕн Начальникĕ А. Брук фельдмаршал, Х. Л. Исмей генерал т. ыт. те килнĕ.

Мускаври аэродромра вĕсене çаксем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ: СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕсем А. Я. Вышинский тата И. М. Майский, Генеральнăй Штаб Начальникĕн Заместителĕ арми генералĕ А. И. Антонов, Мускав Хули Совечĕн Председателĕн Заместителĕ А. В. Астафьев, СССР Оборона Халăх Комиссариачĕн Тулашри Çыхăнусен Отделĕн Начальникĕ Н. П. Кутузов генерал-майор, Мускав хули комендантчĕн ĕçĕсене туса тăраканĕ Н. В. Гребенщиков полковник.

Аэродромра тата çаксем пулнă: Великобритани Посолĕ А. К. Керр господин, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Посолĕ В. А. Гарриман господин, Канада Посолĕ А. Дана Уилгресс господин, Австрали Посланникĕ Д. Маломей господин, Британин Çар Миссийĕн Пуçлăхĕ М. Баррос генерал-лейтенант, США Çар Миссийĕн Пуçлăхĕ Д. Дин генерал-майор, Великобританипе США Посольствисен дипломатиллĕ сотрудникĕсем тата Çар Миссийĕсен членĕсем.

Хирĕç тухса илнĕ çĕрте хисеплĕ хурал тăратнă тата Британипе Совет Союзĕн Государство гимнĕсене каланă. Аэродрома Великобританипе Совет Союзĕн флагĕсемпе илемлетнĕ.

И. В. Сталин У. Черчилль господинпа калаçни

Октябрĕн 9-мĕшĕнче ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин Великобританин Премьер-Министрĕпе Уинстон Черчилль господинпа калаçнă.

Калаçура СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ А. Иден господин тата Великобританин ССР Союзĕнчи Посолĕ А. К. Керр господин пулнă.

В. М. Молотов Антони Иден господинпа калаçни

Октябрĕн 9-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕпе Антони Иден господинпа калаçнă.

Калаçура СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский тата Великобритани Посолĕ А. К. Керр господин пулнă.

Англипе Совет Союзĕнчи Профсоюзсен Комитечĕ пĕлтерни

Англипе Совет Союзĕнчи Профсоюзсен Комитечĕ вăл Пĕтĕм Союзри Профессиллĕ Союзсен Центральный Совечĕн тата Британири Тред-юнионсен Конгресĕн представителĕ пулса тăрать. Вăл 1944 çулхи октябрĕн 2-мĕшĕпе 6-мĕшĕ хушшинче Лондонра лару туса ирттернĕ.

Ларура çаксем пулнă: В. Кузнецов, Е. Сидоренко, Е. Савков, Е. Шульга, М. Кузнецов, М. Фалин (кусем — Пĕтĕм Союзри Профсоюзсен Центральный Совечĕнчен) тата В. П. Аллен, Андрью Конли, Е. Эдвардс, Г. Я. Гаррисон, Ф. Уолстленкрофт, Уолтер Ситрин (кусем — Британири Тред-юнионсен Конгресĕн Генсоветĕнчен).

Ытти ыйтусемпе пĕрлех çав Комитет гитлерла Германипе уйăн союзникĕсене хирĕç пыракан вăрçа ăнăçлăн ертсе пырас тĕлĕшпе профсоюзсен мĕн тумалли çинчен сӳтсе-явнă.

Комитет Англипе Совет Союзĕнчи Профсоюзсен Комитечĕн юлашки сессийĕ пулса иртнĕренпе (çав сесси вăл 1943 çулхи июль уйăхĕнче Мускавра пулса иртнĕ) лару-тăрура мĕнле улшăнусем пулнине пăхса тухнă тата союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсемпе Хĕрлĕ Çар тăшмана часрах çĕнтерме пултарччăр тесе продукци ытларах туса кăлармашкăн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме кирли çинчен уйрăмах тĕплĕн сӳтсе-явнă.

Комитет çапла калать: Великобританипе Совет Союзĕнчи профсоюзниксен чи малтанхи задачи — продукци ытларах туса кăларма тăрăшасси, çавăн пекех тата рабочисемпе служащисен халăхи пурнăç шайне чакарттармасăр хӳтĕлесе тăрасси пулса тăрать.

Комитет çапла шутлать: çирĕп те нумайлăха пыракан мир тăвас тесен, Совет Союзĕнчи, Великобританири тата Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи халăхсем хушшинче тата çав çĕршывсенчи профсоюзсем хушшинче çирĕп пĕрлĕх тумалла.

Комитет Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцине пухма хатĕрленесси тата ăна пухса ирттересси çинчен сӳтсе-явнă. Унăн çĕнĕвĕсене халь Пĕтĕм Союзри Профессиллĕ Союзсен Центральный Советне тата Британири Тред-юнионсен Конгресĕн Генеральнăй Советне параççĕ.

Вăрнар районĕнчи колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне 10.000 пăт тырă параççĕ

ВĂРНАР, октябрĕн 9-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фончĕ валли планран ирттерсе государствăна 10.000 пăт тырă пама йышăнчĕç. Çак тырра хатĕрлев пунктне турттарма тытăнчĕç.

ВКП(б) Обкомĕнче

Шупашкар районĕнчи колхозсем государствăна тырă памалли планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 12.000 пăт тырă пама йышăннă. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çак пуçарăва ырланă.

ВКП(б) Обкомĕ парти райкомĕсене çак патриотла юхăм хамăр государствăн оборона вăй-хăватне тĕреклетес ĕçре питех те пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен колхозниксене анлăн ăнлантарса пама. Шупашкар районĕнчи колхозсем чĕнсе каланине колхозниксен пухăвĕсенче сӳтсе-явассине организацилеме тата республикăри колхозсем çак ĕçе активлăн хутшăнмалла тума хушнă.

Государство валли Хĕрлĕ Çар фондне çĕнĕрен пиншер пăт тырă парар!

Шупашкар районĕнчи колхоз председателĕсем Чăваш республикинчи мĕнпур колхозсене ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Юлташсем, колхозниксемпе колхозницăсем тата колхоз руководителĕсем!

Хĕрлĕ Çарăн Отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи аслă çĕнтерĕвĕсем пире тылра çĕнĕ çитĕнӳсем тума хаваслантараççĕ. Отечественнăй вăрçăн тăваттăмĕш çулĕнчи йывăр условисенче те пирĕн орденлă Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем тырпул, çĕрулмипе пахча-çимĕçсем иртнĕ çулхинчен нумайрах туса илчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем тата ялхуçалăхĕнчи мĕнпур работниксем хастарлăн ĕçленипе вăрçă вăхăтĕнчи тырпула уйхирсенчем пĕтĕмпех пуçтарса кĕртнĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕн задача пур колхозсенче те авăн çапас ĕçе вĕçлесси, социализмлă çĕршыв умĕнчи хамăр тивĕçе пĕр куна та кая хăвармасăр пурнăçа кĕртесси —государствăна тырă памалли плана тултарасси пулать.

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, пирĕн районри 101 колхоз пурте государствăна обязательствăсем тăрăх та, МТС ĕçлесе панăшăн та тырă парса татнă тата Хĕрлĕ Çар фондне тырă хывса çитернĕ, кунсăр пуçне тата нумай колхозсем 1945 çулшăн аванс шучĕпе нумай тырă панă. Çитес кунсенче пирĕн колхозсем государствăна çĕрулмипе пахча çимĕçсем парса татаççĕ. Пирĕн районри колхозсем октябрĕн 9-мĕшĕ тĕлне пĕтĕм тыррăн 85 процентне çапса пĕтернĕ, кĕрхи çĕртме тумалли плана 80 процент тултарнă.

Паян эпир, колхозсемпе ялсовет председателĕсен канашлăвĕнче, районри организацисен руководителĕсемпе пĕрле, çак çывăхри 3—4 кун хушшинче планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 12.000 пăт тырă пама пултăмăр тата сире, Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем, колхозсен руководителĕсем, çакна пурнăçа кĕртме чĕнетпĕр:

1. Çывăхри 3—4 кун хушшинче государствăна тырă памалли плана мĕнпур колхозсем тăрăх пĕтĕмпех тултарса çитермелле;

2. Пирĕн примера йышăнса, государство валли Хĕрлĕ Çар фондне çĕнĕрен çĕршер те пиншер пăт тырă парар. Вăрçăн çак татăклă тапхăрĕнче Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа тата пур майсемпе те пулăшар!

Пирĕн республикăри колхозсенчен ытларахăшĕсем, хамăрăн Тăван çĕршыв умĕнчи патриотла тивĕçе чыслăн пурнăçласа, Хĕрлĕ Çар фондне çĕнĕрен çĕршер те пиншер пăт тырă пама пултараççĕ.

Сывă пултăр пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр аслă çулпуç Сталин юлташ!

Чĕнсе каланине колхоз председателĕсен районри канашлăвĕнче йышăннă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 8-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 8-мĕшĕнче пирĕн çарсем САРЕМА (ЭЗЕЛЬ) утравĕ çинче çаплах наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 40 пункта ытла тытса илнĕ, вăл шутра — ВЫХМА, ТЫРИСЕ, ХАКЬЯЛА, МУСТЬЯЛА, САУВЕРЕ, АБУЛА, МЯТТАСЕЛЬЯ, АНИЯЛА, ИРАСЕ ятлă пысăк ялсем.

РИГА хули енче пирĕн çарсем ОГРЕ хулипе пысăк чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ПАБАЖИ, ИНЧУКАЛНС, КАЛНАМУЙЖА, РОПАЖИ, КАНГАРИШИ, ТИНУЖИ, ЯУНОГРЕ, СИЛИ ятлă пысăк ялсем тата ПАБАЖИ, ИНЧУКАЛНС, РЕМИНЕ, КАНГАРА чугун çул станцийĕсем.

БАЛТИКА тăрăхĕнчи 1-мĕш фронт çарĕсем, Белоруссири 3-мĕш фронт çарĕсем пулăшнипе, ШАУЛЯЙ (ШАВЛИ) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра наступлени пуçласа янă та тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă, 4 кун хушши çапăçса, 100 километр таран малалла кайнă, татса кĕнĕ вырăна 280 километр таран сарнă.

Наступленире пирĕн çарсем нимĕçсен оборонин ТЕЛЬШАЙ, ПЛУНГЯНЫ, МАЖЕЙКЯЙ, ТРИШКЯЙ, ТИРКШЛЯЙ, СЕДА, ВОРНЫ, КЕЛЬМЫ ятлă тĕреклетнĕ паха пунктсене туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 2.000 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — КРУОПЯЙ, ПАПИЛЕ, КУРШЕНАЙ, КУРТОВЯНЫ, ИОЗЕФОВО, РРАУДЕНА, ЮЗЕФОВ, ШАВКЯНЫ, УПИНА, ВИТСОДЗИ, УЖВЕНТЫ, ВАЙГОВО, КРОЖИ, САВДЫНИКИ, СТУЛЬГИ, НЕМОКШТЫ, ПИЕВЕНАЙ, НЕВАРЕНАЙ, ЭЙГИРДЖЯЙ, ВЕШВЯНЫ, НЕРИМДАЙЧАЙ, ЛУКНИКИ, ЯНОПОЛЬ, ПОВАНДЕНИ, КОЛТЫНЯНЫ, ВЕРСЯДЫ, СКАВДВИЛИ, ЖЕМАЛЕ, ЖИДИКАЙ, ИЛАКАЙ, ДЕРВЯНЫ, КОВНАТОВО, ЛЕПЛАВКИ, ЖОРАНЫ, МЕДЫНГЯНЫ, ТВЕРЫ, ЭЛКИ, РЕТОВО, ШИЛЕЛИ, ДУМШИШКИ, ВИДУКЛИ, ВОДЖГИРЫ, СКИРСТЫМОНИ, ВАРНОЛАВКИ, ЭРЖВИЛКИ, ДАРГАЙТЕЛИ ятлă пысăк ялсем тата КУЖИ, ПАВЕНЧАЙ, ПАТИРЕЛЯЙ, РАВДЕНЫ, ТРИШТЯЙ, ДУСЕЙКЯЙ, ТЕЛЬШАЙ, ЛЕПЛАВКИ, ВИДУКЛИ, ВАРЛАУКИС ятлă чугун çул станцийĕсем.

НАРЕВ шывĕн сылтăм хĕрринче ПУЛТУСК хулинчен кăнтăртарахри районра пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене ăнăçлăн сирсе янă.

Венгри çĕрĕнче БЕКЕШЧАБА хулинчен çурçĕртерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, МАЗЕПУР хулипе чугун çул узелне, СЕНТЕШ хулипе чугун çул узелне, ХОДМЕЗЕВАШАРХЕЛЬ хулипе чугун çул узелне, САРВАШ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ФЮЗЕШ-ДЬЯРМАТ, НАДЬ-БАЙОМ, ЭНДРЕД, ГАДОРОШ, СЕГВАР ятлă пысăк ялсем тата НАДЬ-БАЙОМ, ФЮЗЕШ-ДЬЯРМАТ, САРВАШ, ГАДОРОШ, СЕГВАР ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем октябрĕн 6-мĕшĕпе 7-мĕшĕнче тăшманăн 4.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Румынсен ТУРНУ-СЕВЕРИН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чăсĕсемпе пĕрле кĕрешсе, ПЕТРОВАЦ, ЛЕСКОВАЦ, ЖДРЕЛО, КРЕПОЛЬИН, НОЖАНИЦА, МИЛОТОВАЦ, ЗЛОТ, ПОДГОРАЦ, БОГОВИНА ятлă ялсене туртса илнĕ. Пирĕн çарсем КЛОКОЧЕВАЦ, ХАЕЧАР районĕсенче çавăрса илнĕ тăшман ушкăнĕсене пĕтерсе тăкнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ.

Октябрĕн 7-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 156 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 31 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ГЕРМАНИН БРЕСЛАУ ХУЛИПЕ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛНЕ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА ТАПĂННИ

Октябрĕн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Германин Бреслау хулипе чугун çул узелне йышлăн вĕçсе кайса тапăннă.

Бомбăсем пăрахнипе дула, Бреслау, чугун çул узелĕнче 30 тĕлте пушар тухнă. Поездсемпе вăрçă склачĕсем çуннă. Пушарсенче взрывсем пулнă. Пуринчен те вăйлăрах пушарсемпе взрывсем Бреслау хулин кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕпе кăнтăр пайĕнче тата газ завочĕпе металлурги завочĕн территорийĕнче пулнă. Пушарсен çулăмне пирĕн летчиксем Бреслау хулинчен 200 километр ытла каялла вĕçсе кайсан та курса пынă.

☆ ☆ ☆

Ленинград фрончĕн çарĕсем Сарема (Эзель) утравĕ çинче çаплах наступлени туса пынă. Тăшман хăйĕн тĕреклетнĕ пункчĕсенче хирĕç тăнине пусара-пусара, пирĕн çарсем çулсен Выхма тата Мустьяла ятлă узелĕсене тытса илнĕ. Эстонецсен пĕр чăсĕнчи боецсем тăшмана аякран кайса çавăрса илнĕ те нимĕçсен пехотин 2 батальонне аркатса тăкнă. 24 тупă тата ытти трофейсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнисем çапла каласа кăтартаççĕ: нимĕç командованийĕ хăйĕн çарĕсене çав утрава темле пулсан та хăйсен аллинче тытса тăма хушнă. Çакна пĕлнĕ: тăшман чи юлашки кунсемччĕнех Сарема утравĕ çине тинĕс тăрăх та, сылăшпа та çĕнĕ вăйсем ярса тăнă.

* * *

Рига хули енче пĕр соединенин Рига заливĕ хĕррипе наступлени туса пыракан чăсĕсем Кижупе тата Петэрупе шывĕсем урлă каçса кайнă. Пĕр чăсри подразделенисем тăшман ушкăнне Рига заливĕ хĕррине хĕссе лартнă та 300 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Рига хулинчен хĕвелтухăçнерехре пирĕн вăрманлă-шурлăхлă вырăнти йывăр условисенче кĕрешекен çарсем тăшманпа çапăçса 10 километр малалла кайнă та Огре хулишĕн çапăçма тытăннă. Совет пехотинецĕсем Огре хулин кăнтăр хĕррине вăркăнса кĕрсе кайнă. Пирĕн ытти чăссем Огре шывĕ урлă каçнă та Огре хулин çурçĕр хĕррине кĕрсе кайнă. Урамсенчи çапăçусенче пирĕн çарсем нимĕçсен гарнизонне аркатса тăкнă та Огре хулипе чугун çул станцине пĕтĕмĕшпех тытса илнĕ. Огре хулине пырса кĕмелли çулсем çинче тата хула урамĕсенче тăшманăн 900 виллине çити шутласа тухнă.

* * *

Балтика тăрăхĕнчи 1-мĕш фронт çарĕсем, Белоруссири 3-мĕш фронт çарĕсем пулăшнипе, наступлени пуçласа янă. 4 кун каярах пирĕн вăйлăлатнă разведка отрячĕсем ирхине ирех тăшмана Шауляй (Шавли) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăç тата кăнтăр-хĕвеланăç районĕсенче сасартăк атакăланă. Совет подразделенийĕсем çапăçа-çапăçа Вента шывĕ урлă каçнă та нимĕçсен речĕсем ăшне савăлланса кĕрсе кайнă. Кăнтăр тĕлĕнче наступление пирĕн тĕп вăйсем кĕрсе кайнă, вĕсем вара тăшманăн шалалла инçене каякан оборонине татнă. Нимĕçсем, хăйсен малтанхи позицийĕсене каялла туртса илме хăтланса, вăйлă контратакăсем тунă. Пирĕн çарсем часах тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та, малалла куçса пырса, шоссе çулĕсен Тришкяй ятлă паха узелне тытса илнĕ. Нимĕçсем хăйсен Вирвинай шывĕ патĕнчи оборонин иккĕмĕш линине хăйсен аллинче тытса тăма тăрăшнă. Анчах та совет боецĕсем татăклăн кĕрешсе, нимĕçсем тăрăшнине кунта та пăчлантарса лартнă. Каялла чакакан гитлеровецсене таптаса пырса, пирĕн пехота Вирвинай шывĕ урлă каçнă та тăшман оборонине татнă, çапăçура 2.000 нимĕç салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ. Малалла хăвăрт куçса пырса, пирĕн çарсем Плунгяны хулипе çулсен паха узелне туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 2.000 пункта ытла йышăннă. Тăшман питĕ пысăк çухатусем тӳсет. Нимĕçсен 2 пехотнăй дивизине, 5 охраннăй полкне, пĕр танковăй дивизине тата эсэсовецсен пĕр танковăй бригадине çĕмĕрсе тăкнă. Нимĕçсен ытти чăсĕсене йывăр çухатусем тӳстернĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, пĕр кун хушшинче нимĕçсен 70 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Тăшманран 58 тупă, 32 миномет, 150 автомашина тата ытти трофейсем те тытса илнĕ. Тыткăна нумай илнĕ.

* * *

Нимĕçсем Пултуск хулинчен кăнтăртарахра, хăйсен вăйĕсене урăхла ушкăнлатса, пирĕн Нарев шывĕн сылтăм хĕрринчи плацдарма йышăнса тăракан чăссене хирĕç çĕнĕрен атакăсем пуçласа янă. Совет пехотинецĕсемпе артиллерисчĕсем тăшман атакисене пурне те ăнăçлăн сирсе янă, нимĕçсене çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен йывăр çухатусем кӳнĕ. Кун каçиччен 2.000 гитлеровеца çити тата нимĕçсен 42 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Венгри çĕрĕнче пирĕн çарсем ăнăçлă наступление вăйлатса пынă. Пĕр соединени чăсĕсем çапăçса малалла куçса пынă, Мезетур хулипе чугун çул узелне туртса илнĕ. Венгерсен 21-мĕш пехотнăй полкне аркатса тăкнă. Çав полкри 1.000 салтакпа офицера ытла тыткăна илнĕ. Тепĕр районра совет пехотинецĕсемпе танкисчĕсем, хăвăрт малалла куçса, Сентеш хулине туртса илнĕ. Венгерсен Сегед ятлă пысăк хулинчен 20 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Ходмезевашархель хулине туртса илнĕ, вăл çулсен паха узелĕ пулса тăрать. Совет çарĕсем пыра-пыра çапнипе тăшман хăйĕн хĕçпăшалĕпе техникине пăрахса хăварать. Орошхаза хулинче хăй тĕллĕн çӳрекен 10 юсавлă тупă тата 3 танк тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем 2 чугун çул эшелонне тата боеприпассем турттарса пыракан 150 лава тытса илнĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн карапĕсем Балтика тинĕсĕнче нимĕçсен 8.000 тонна таякан транспортне шыва путарнă.

Чугун çул валли вутă хатĕрленĕ çĕрте лайăх ĕçлекен колхозсем

ШАХАСАН. Нумай колхозсем ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлессишĕн кĕрешнипе пĕрлех чугун çул валли вутă хатĕрленĕ çĕрте те активлăн ĕçлеççĕ. «Свет», «Красноармеец», «Комсомол». Енĕш ялсоветĕнчи «Новая жизнь», Çĕнĕ Чалкасси ялсоветĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозсем кăçал чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттармалли плана 90 процент таран тултарнă.

Çав вăхăтрах хăшпĕр колхозсем, уйрăмах «Герой», «Чăваш ЦИК», «Березовка» колхозсем вутă хатĕрлес тĕлĕшпе питех те сÿрĕк ĕçлеççĕ. Вĕсем плана пурĕ те 10—15 процент çеç тултарнă. Вĕсем пĕтĕм района каялла туртса пыраççĕ. Халĕ ялхуçалăх ĕçĕсем вĕçленсе пынă май колхозсенче ĕç вăйĕ пушанать. Колхоз руководителĕсен тивĕçĕ — вăрмана ĕçлеме çынсем кирлĕ чухлĕ уйăрса ярасси пулать. Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, уява вăрман хатĕрлевĕнче çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешмелле.

В. ВЕСЕЛОВ.

Вăрманта лайăх ĕçленĕ колхозниксене преми панă

ÇЕРПУ. Районри «Богатырь», «Красная Тиушия», «Ĕмĕт» колхозсем чугун çул валли вутă хатĕрлемелли 3-мĕш квартал планне срокчен тултарчĕç. Асăннă колхозсенчи чылай колхозниксене премисем панă. А. Ильин, Ф. Михайлова, Г. Ефремов юлташсене 10-шар метр пусма таварĕ, супăнь тата ытти таварсем панă.

Хĕрлĕ Çара стахановла ĕçпе саламлатпăр

Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене аркатa-арката хĕвеланăçнелле каять. Эпир, Йĕпреç вăрманпромхозĕнчи вăрман касакансем, Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавасланса, вăрман хатĕрлемелли плана кашни уйăхрах тултарса пыратпăр. Пирĕн бригада сентябрьти плана 180 процент тултарчĕ.

Эпир, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, тата лайăххăрах ĕçлеме пултăмăр. Хамăр сăмаха чыслăн пурнăçласа, Хĕрлĕ Çара стахановла ĕçпе саламлатпăр.

А. ПАВЛОВ,
Йĕпреç вăрманпромхозĕнчи бригадир.

РЕМЕСЛО УЧИЛИЩИСЕМПЕ ЧУГУН ÇУЛ УЧИЛИЩИСЕНЧЕ ТАТА ФЗО ШКУЛĔСЕНЧЕ АРÇЫН АЧАСЕМПЕ ХĔРАЧАСЕН УЙРĂМ ВĔРЕНСЕ УЙРĂМ ĔÇЛЕКЕН ГРУППИСЕНЕ ТĂВАССИ

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Ĕç резервĕсен главнăй управленийĕн начальникĕ Москатов юлташ ремесло училищисемпе чугун çул училищисенче тата ФЗО шкулĕсенче арçын ачасемпе хĕрачасен уйрăм вĕренсе уйрăм ĕçлекен групписене тума хушнă. Ачасене унта вĕренÿ çулĕ пуçланнă чухне илеççĕ. Вăл группăсене профессисем тăрăх тата ачасем миçе çултине, миçе çул вĕреннине шута илсе йĕркелеççĕ. Училищĕсенче 2-мĕш çул вĕренекенсене çав группăсене 1945 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен уйăрмалла. (ТАСС).

РЕМЕСЛО УЧИЛИЩИСЕМПЕ ЧУГУН ÇУЛ УЧИЛИЩИСЕНЧЕ ТАТА ФЗО ШКУЛĔСЕНЧЕ ВĔРЕНЕКЕНСЕН ХУДОЖЕСТВАЛЛА ПУЛТАРУЛĂХНЕ КĂТАРТНИ

Мускава Пĕтĕм Союзри ремесло училищисемпе чугун çул училищисенче тата ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсен художествăллă пултарулăхне кăтартма 400 çынна яхăн пухăннă. Вĕсем хушшинче Сталинградран, Чкаловран, Воронежран тата Хабаровскран килнĕ солистсем пур. Çитес кунсенче Магнитогорскран, Молотовран, Ростовран ташлакан тата юрлакан коллективсем килеççĕ. Мускаври Ленинградри монофонистсен ансамблĕ, Чкалов хулинчи ксилофонистсем, Новосибирскри баянистсем, Украинăри бандуристсем тата Белоруссири цимбалистсем хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ.

Чи лайăх коллективсемпе уйрăм çынсене юлашки концертра тухса юрлама е калама уйăрса илеççĕ. Юлашки концерт ССР Союзĕн Пысăк Академи театрĕн филиалĕнче пулать.

Художествăллă пултарулăха пынă коллективсемпе уйрăм çынсем Мускаври нумай клубсемпе культура дворецĕсенче тата Союзсен çуртĕн колоннăллă залĕнче юрласа е каласа кăтартаççĕ. (ТАСС).

26 МИЛЛИОН БАНКА КОНСЕРВА

Узбекистанри консерва завочĕсенче çĕнĕ фруктсемпе пахча-çимĕçсенчен консерва тăвас ĕç вăйлă пырать. 26 миллион банка консерва тата 6.000 тоннăна яхăн ытти тĕрлĕ продукци туса кăларнă та ĕнтĕ. (ТАСС).

Колхозсен Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăвĕ

Саратов колхозникĕсем чĕнсе каланине сÿтсе-явнă хыççăн

КУСЛАВККА. (Телефонпа). ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ республикăра авăн çапас ĕç çителĕксĕр пыни çинчен йышăннă постановление сÿтсе-явнă хыççăн районри чылай колхозсем авăн çапас ĕçе хăвартлатрĕç. Паянхи кун тĕлне «Красная Чувашия» (председателĕ Андреев юлташ), «Красный Курган» (председателĕ Голубев) тата Андреев ячĕпе тăракан колхозсем авăн çапса пĕтерчĕç. «Путь Ленина» колхоз та паян çапса пĕтерет. Анчах «Первое мая», Тельман ячĕпе тăракан колхозсенче авăна ытла та вăрахăн çапаççĕ. Тельман ячĕпе тăракан колхозра 255 гектар çинчи тырра çапмалла, паянхи кун тĕлне 126 гектар çинчи тырра кăна çапнă. Кунта итем çинче кăнтăрла кăна ĕçлеççĕ, çĕрле çапассине организацилемен.

Районра çĕрулми кăларас ĕç те çителĕксĕр пырать-ха. 57 колхозран 15 колхоз кăна çĕрулми кăларса пĕтернĕ. Çĕрулми кăларса пĕтернисен шутне «Кзыл куч», «Моряк», «Красный Курган», «Путь к социализму», «Канаш», Воробьевкăри «Большевик», «III-ий Интернационал», Андреев ячĕпе тăракан колхозсем кĕреççĕ. Çак колхозсемех государствăна обязательство тăрăх çĕрулми парса татрĕç. «Заря», «Первое мая» колхозсем çĕрулмине çурри çеç кăларнă. «Красный партизан» колхоз çĕрулмине пĕтĕмпех кăларса пĕтернĕ, анчах та кăларнă çĕрулми уйрах сапаланса выртать.

«Коммунист», «Новая жизнь» колхозсем кĕрхи çĕртме туса пĕтерчĕç. «Правда» тата «Динамо» колхоз членĕсем, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, кунĕн-çĕрĕн кĕрхи çĕртме тăваççĕ.

Саратов облаçĕнчи Воскресенски районри Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем чĕнсе каланине районри колхозсем пысăк çĕкленÿпе сÿтсе-яваççĕ. «III-ий Интернационал», «Память Чкалова», Андреев тата Калинин ячĕсемпе тăракан колхозсенче çав чĕнĕве кашни бригадăрах сÿтсе-явнă. Саратов колхозникĕсем чĕнсе каланине кунта Карачура ялсоветĕн председателĕ Шмелевпа коммунистка Федорова юлташсем тĕплĕн ăнлантарса панă. Колхозниксемпе колхозницăсем калининецсем чĕнсе каланине ырларĕç тата ялхуçалăхĕнчи ĕçсене вĕçлес тĕлĕшпе çирĕп обязательствăсем илчĕç.

Н. АНИСИМОВ.

Мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлессишĕн

МУРКАШ, октябрĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Саратов облаçĕнчи Калинин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн членĕсем чĕнсе каланине кашни колхозрах сÿтсе-яваççĕ. «Броневик» колхоз, ăмăртăва хутшăнса, ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлесе пырать. Октябрĕн 5-мĕшĕнче вăл кĕрхи çĕртме туса тата авăн çапса пĕтерчĕ. Клевер вырса пухнă, вăррине шĕкĕлчесе хунă. Çак колхоза Отечественнăй вăрçă инвалиĕ Матвеев юлташ председатель пулса ертсе пырать. Вăл ĕç вăйне пĕлсе вырнаçтарса тухнă. Кунта халĕ витесемпе ферма çурчĕсене юсаса ăшă каймалла мар тăваççĕ.

Çатракасси ялсоветĕнче 4 колхоз. Вĕсенче пуринче те Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем чĕнсе каланине сÿтсе-явнă. Çав чĕнĕве ырласа, колхозниксемпе колхозницăсем Октябрь умĕнхи ăмăртăва хутшăннă. Çак ялсоветне кĕрекен «Гвардия» колхозра паянхи кун тĕлне, çĕрулми кăларса пĕтерме, октябрĕн 12-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерме, октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне кĕрхи çĕртме туса пĕтерме обязательство илнĕ.

«Гвардия» колхоз, мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра вĕçлес тесе, кÿршĕри «Красный воин» колхоза социализмлă ăмăртăва чĕнчĕ. «Красный воин» колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне вĕçлеме пулчĕ. Районри мĕнпур колхозсенче Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăрту анлăн сарăлса пырать.

И. КОЖАКОВ,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Ăмăртăва хутшăнаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, октябрĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхозсенче Саратов облаçĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем чĕнсе каланине сÿтсе-яваççĕ, ăмăртăва хутшăнса, конкретлă обязательствăсем илеççĕ. Димитров ячĕпе тăракан колхозра авăн çапас ĕç кая юлса пынă. Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем чĕнсе каланине сÿтсе-явнă хыççăн, колхозниксем авăн çапассине октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне, кĕрхи çĕртме тăвассине октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне вĕçлеме пулчĕç. Паян çĕрулми кăларса пĕтерчĕç, тепĕр виçĕ кунтан государствăна çĕрулми парса татаççĕ. «Чамыш», «Буксир», «Жнейка» тата ытти колхозсем те Октябрь уявне ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсене вĕçленипе кĕтсе илессишĕн кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ. «Жнейка» колхозра вăрлăх фондне чи лайăх тырă уйăрнă. Кунта килес çул пахча-çимĕç вăрлăхĕ нумай тума шутлаççĕ, çав шутпа 65.000 штука чĕкĕнтĕр, 60.000 штука сахăр кăшманĕ типĕ подвала тирпейлесе хунă.

С. ШАДИН.

Государствăна çĕрулми парса татрĕç

Елчĕк районĕнчи Тăрмăш ялсоветне кĕрекен «Знамя» колхоз государствăна ытти колхозсенчен маларах тырă тата çĕрулми парса татрĕ. Çак колхоз пур ĕçе те маларах туса пыни пĕтĕмпех ĕçе пĕлсе организациленинчен килет. Кунта кашни колхозник ăçта ĕçлессине малтанах пĕлсе тăрать; пур ĕçе те уйрăм сдельщинăпа туса пыраççĕ. Колхозра тырпул пухса кĕме тытăннăрантах пĕрлешÿллĕ столовăй ĕçлет. Колхоз председателĕ Н. Алексеев юлташ яланах колхозниксемпе пĕрле. Колхозниксемпе колхозницăсем, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, паян-ыран авăн çапса пĕтереççĕ, октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне кĕрхи çĕртме туса пĕтерессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Çĕртме тăвас ĕçре Н. Чернов бригади малта пырать.

П. ЩЕРБАКОВ.

Тăлăх ачасен çуртне уçма пулăшмалла

Тăлăх ачасен нушисене шута илсе, Çĕньял Покровскинчи 7 çул вĕренмелли шкул директорĕ И. Никитин юлташ шкул çумĕнче вĕсем валли çурт уçма шут тытнă. Хăйĕн шухăшĕ çинчен вăл ялти активпа пĕлтернĕ. Актив, çак ыйтăва сÿтсе-явса, тăлăх ачасен çуртне уçма йышăннă. Колхозсем ачасене тăрантарма кирлĕ апат-çимĕç уйăрса пама килĕшнĕ. Никитин юлташ 6 колхозпа договор тунă. Çав договорсем тăрăх 3 тонна тырă, 4,5 тонна çĕрулми, 300 килограмм кĕрпе, 160 килограмм купăста тата ытти пахча-çимĕç, аш-какай, сĕт-çу пухăнмалла. Çавăн чухлĕ апат-çимĕç 30 ачана çулталăк тăрантарма çитет. Унсăр пуçне, ачасен çурчĕ çумĕнче сумалли ĕне, 2 пăру, 2 сурăх, 3 сысна çури пулаççĕ. Выльăхсем валли апат пур.

Çуртйĕрсем те çителĕклĕ. «Çĕньял» колхоз пулăшнипе ачасем пурăнмалли çурта юсанă, халĕ пÿлĕмсем тăваççĕ. Вутă хатĕрленĕ, тыткаламалли вак-тĕвек япаласем пухнă.

Пĕр сăмахпа каласан, вырăнта мĕн тума пултарнисене пурне те тунă, çурта уçма хатĕрлесе çитернĕ.

Анчах тивĕçлĕ организацисем енчен кирлĕ пек пулăшу пани çитместь. Ишлей райсовет исполкомĕн гособеспечени отделĕ (заведующийĕ А. Прохоров юлташ) çурт валли укçа-тенкĕ уйăрмасть, ачасене тумлантарма кирлĕ япаласене тупса памасть. Çавăн пекех ачасен выртса тăмаллисем те çук. Çак ыйтупа Никитин юлташ Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариатĕнче пулнă. Анчах унта Никитин юлташа ĕçлĕ пулăшу пама мар, ачасен çуртĕнче мĕнле йĕрке пулмалли çинчен те каласа кăтартман. «Эсир уçакан çурт государствăн пулмасть, çавăнпа сире пулăшу пама пултараймастпăр», тесе кăларса янă ăна.

Никитин юлташ тата ăна пулăшакан активпа колхозсем питех те кирлĕ ĕç тăваççĕ: вĕсем тăлăх ачасенчен социализмлă обществăна юрăхлă çынсем пăхса ÿстерме тăрăшаççĕ. Вĕсем тăрăшни пурнăça кĕтĕр тесен, тивĕçлĕ организацисен Çĕньял Покровскинчи тăлăх ачасен çуртне уçма май пур таран пулăшмалла.

Т. ИВАНОВ.
(Хамăр корр.).

Мускава Англирен коопераци тĕлĕшпе ĕçлекенсен делегацийĕ килнĕ

Октябрĕн 8-мĕшĕнче Мускава Британири коопераци тĕлĕшпе ĕçлекен паллă çынсен ушкăнĕ килнĕ.

Делегацие Р. А. Палмер ертсе пырать (вăл — Коопераци союзĕн генеральнăй секретарĕ тата вице-президенчĕ, çавăн пекех тата Пĕтĕм тĕнчери Коопераци Альянсĕн президенчĕн ĕçĕсене туса тăраканĕ). Делегаци членĕсем çаксем: Д. Ж. Эгнью господин (Коопераци союзĕн вице-президенчĕ), Г. С. Уудс господин (çав Союз исполпомĕн членĕ тата Парламент членĕ) тата Англипе Шотландири Курттăм Илекен Обществăсен директорĕсем Джил господинпа Д. М. Дэвидсон господин.

Делегацие аэродромра çаксем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ: СССР тата РСФСР Центросоюзĕн Президиумĕн председателĕ Н. П. Сидоров юлташ, çав Президиум председателĕн заместителĕ М. И. Шахурин юлташ тата Центросоюзăн ответлă сотрудникĕсем В. М. Волосов, Ф. Д. Садохов, Е. И. Митюрина, Ю. М. Вейнтрауб юлташсем.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ октябрĕн 7-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Тăшман минометсемпе тата пулеметсемпе питĕ хаяррăн персе тăнă пулин те, союзниксен çарĕсем Леопольд каналĕ урлă каçса кайнă. Антверпен хулинчен çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем Голланди çĕрне шалалла кĕрсе пынă. Çавăн пекех тата Поппель хулипе Гильваренбек хулинчен çурçĕртерехре те çитĕнÿсем тунă. Неймеген хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тĕллĕн-тĕллĕн питĕ хаяррăн çапăçнă. Убах хули районĕнче, Аахен хулинчен çурçĕртерехре, союзниксен çарĕсем кăштах çурçĕр тата çурçĕр-хĕвелтухăç еннелле куçнă. Çавăн пекех тата Убах хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнелле каякан çулпа пĕр миля çурă малалла кайнă.

Дриан форчĕ районĕнче тăшман хытă хирĕç тăнă. Нанси хулинчен çурçĕртерехре тăшман контратака тунă та кăштах малалла кайнă. Люневиль хулинчен хĕвелтухăçнерехре союзниксем Парруа вăрманĕ витĕр тухса малалла кайнă. Баккар хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре вăйлă çапăçнă хыççăн Англемон хулине ирĕке кăларнă. Эпиналь хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре нимĕçсене Клюэ сывăхĕнчи чул кăларакан вăйлă çирĕплетнĕ вырăнтан хĕссе кăларнă, ку вырăн союзниксене наступлени тума чарса тăнă. Вогез тăвĕсен пуçламĕшĕнче союзниксен çарĕсем Тилло хулине виçĕ енчен çавăрса илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн çапăçу районĕнчи тата Голландири вăрçă объекчĕсене пыра-пыра тапăннă. Бомбардировщиксен питех те пысăк соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Германири нумай хуласенчи вăрçă тĕлĕшпе паха предприятисене пырса тапăннă.

* * *

ЛОНДОН, октябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ октябрĕн 8-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Леопольд каналĕнчен иртсе кайнă хыççăн Шельда шывĕ вăррин кăнтăр хĕрри патнелле куçса пыракан çарсем тăшманпа хаяррăн çапăçаççĕ. Антверпен хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем Вальхерен утравĕ патне каякан çулсем патнелле куçнă. Вальхерен утравĕ хĕрринче октябрĕн 7-мĕшĕнче йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем тинĕс дамбисем çине бомбăсем пăрахнă. Неймеген хулинчен çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем Хальберен ялне ирĕке кăларнă. Офейоден районĕнче çапăçусем пыраççĕ.

Аахен хули секторĕнче пирĕн çарсем Беггендорф тата Басвейлер пункчĕсене туртса илнĕ, çав пунктсем вĕсем Убах хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăрхĕвелтухăçнерехре лараççĕ. Альсдорф хулипе юнашар ялсенче тăшман хирĕç тăни вăйсăрланса пырать. Фронтăн ку участокĕн çурçĕр флангĕнче союзниксен çарĕсем Вальденрат пунктне туртса илнĕ. Люксембург герцогствинче союзниксен çарĕсем тăшмантан Охтернах тата Вормельдинген хулисене ирĕке кăларнă. Мец хулинчен çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем Мезьер-ле-Мец ятлă пункта кĕнĕ. Дриан портĕнче çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Союзниксен чаçĕсем фортăн çурçĕр-хĕвеланăç тата кăнтăр-хĕвеланăç районĕсене хăйсен аллинче тытса тăраççĕ.

Вогез тăвĕсен пуçламăшĕнче союзниксен çарĕсем икĕ ял туртса илнĕ. Эпиналь хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, тăшман вăйлă контратакăсем тунине пула, союзниксен çарĕсем каялла чакнă.

1.400 йывăр бомбардировщик ытла, 900 истребитель хÿтĕлесе пынипе, Руланд, Магдебург, Белен, Мерзебург, Люцкендорф хулисенчи синтетически нефть завочĕсене, Магдебург, Кассель хулисенчи танк завочĕсене, Кассель тата Клаусталь хулисенчи авиаци моторĕсен завочĕсене, паровозсем тăвакан заводсене тата хими завочĕсене, Цвикау хулинчи самолетсем юсакан мастерскойсемпе автомобиль заводне тапăннă.

СОЮЗНИКСЕН ВĂТАÇĔР ТИНĔС ТАВРАШĔНЧИ ХĔÇПĂШАЛЛА ВĂЙĔСЕН ШТАБĔ ПĔЛТЕРНИСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ октябрĕн 7-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Союзниксен карапĕсем, тупăсемпе персе, союзниксен Франципе Итали чикки патĕнчи çарĕсен флангне пулăшса пынă. Союзниксен ытти суднисем Эгей тинĕсĕнче нимĕçсем оккупациленĕ утравсене пенĕ. Çапла пенĕ хыççăн карапсем çинчи хĕçпăшаллă отрядсем Левита утравĕ çине аннă, утравăн хĕвелтухăç енчи çуррине йышăннă. Утрав çинчи нимĕç гарнизонĕ паранннă.

Италире тăшман хăйĕн вăтаçĕрти фронтне текех тытса тăма пултарайман. Кунта 5-мĕш армири американецсен чаçĕсем майĕпен малалла куçса пынă. Тăшмана унăн Лойано хули патĕнчи позицисенчен хĕссе кăларнă. Сулахай флангра Англи тата Кăнтăр Африка чаçĕсем американецсемпе пĕр вăхăтрах малалла куçса пынă, Монте-Видезе ятлă паха сÿллĕ вырăна йышăннă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Грецири аэродромĕсене атакăланă, тăшманăн Италин çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнчи, Югославири тата Албанири çулйĕрĕсемпе ытти вăрçă объекчĕсене тапăннă.

* * *

ЛОНДОН, октябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ октябрĕн 8-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Рубикон шывĕнчен çурçĕртерехре 8-мĕш армири Инди чаçĕсем Сумисино шывĕ урлă каçнă та Фарнето хулине туртса илнĕ. Вăтаçĕрти секторта 5-мĕш армири Америкăпа Англи тата Кăнтăр Африка чаçĕсем çаплах малалла куçса пынă, кунта тăшман хаяррăн хирĕç тăрать.

Енер йывăр бомбардировщиксем, истребительсен хăватлă соединенийĕ хÿтĕлесе пынипе, Австрири тата Венгрири нефтьрен тĕрлĕ япаласем тăвакан заводсене, сортировка станцийĕсене тата аэродромсене тапăннă. Ытти бомбардировщик-истребительсем тата бомбардировщиксем тăшманăн Адриатика тинĕсĕнчи суднисене тата Балканри тĕрлĕ объектсене атакăланă.

Англипе Грецин сывăхри хĕвелтухăçĕнче тăракан çарĕсен пĕр пĕчĕк подразделенийĕ Эгей тинĕсĕнчи Самос утравне йышăннă. Кĕске тытăçу хыççăн утрав гарнизонĕ паранннă. (ТАСС).

Союзниксен авиацийĕ Германие, Австрие тата Венгрие тапăнни

ЛОНДОН, октябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнă пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер американецсен 1.250 йывăр бомбардировщикĕ, 1.000 истребитель хÿтĕлесе пынипе, Германири вăрçă объекчĕсене тапăннă. Берлинри тата Гамбургри çар завочĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Тапăну питĕ ăнăçлă пулса иртнĕ.

Октябрĕн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен пĕр пине яхăн бомбардировщикĕ Дортмунд, Бремен тата Германин ытти хулисем çине те бомбăсем пăрахнă. Çавăн пекех тата Берлинпа Людвигсхафен хулисене те сывлăшран атакăланă.

Бомбардировщиксен ытти соединенийĕсем Рур облаçĕнчи синтетически горючин икĕ заводне хаяррăн тапăннă.

ЛОНДОН, октябрен 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен Верховнăй командованийĕн штабĕнче илнĕ сведенисем тăрăх, октябрĕн 7-мĕшĕнче Германие 4.000 йывăр бомбардировщикпа истребитель тапăннă. Çав самолетсем Германие тапăнма Англирен, Франциран тата Италирен вĕçсе кайнă.

Акăлчансен 700 йывăр бомбардировщикĕ тăшманăн Эммерих тата Клеве районĕсенчи çулйĕрĕсене тапăннă. Американецсен «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши 1.400 бомбардировщикĕ, 1.500 истребитель ытла хÿтĕлесе пынипе, Вăтаçĕр, Хĕвелтухăç тата Çурçĕр-хĕвелтухăç Германири нумай паха объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

Октябрĕн 7-мĕшĕнчи пек вăйлă тапăнни вăрçă пуçланнăранпа та урăх пулман.

ЛОНДОН, октябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи çарĕсен штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: октябрĕн 7-мĕшĕнче Италире тăракан темиçе çĕр йывăр бомбардировщик Вена хули сывăхĕнчи нефть тасатакан завода, Будапешт хулинчен 70 миля хĕвеланăçнерехре ларакан Дьер хулинчи аэродрома, çавăн пекех тата Будапешт хулинчен 50 миля хĕвеланăçнерехре Дунай шывĕ хĕрринче, Вена хулипе Будапешт хули хушшинчи тĕп чугун çул çинче ларакан Комарно хулин сортировка станцине тапăннă.

НИМĔÇСЕМ ПЕТСАМОРАН НИКЕЛЬ ЫТЛАРАХ ТУРТТАРСА КАЙМА ТĂРĂШАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). «Нюа даглигт аллехандa» хаçатăн Хельсинки хулинчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: «Хельсинкире каланă тăрăх, нимĕçсем Çурçĕр Финляндире вăхăта ытларах тăсма тăрăшаççĕ. Çав вăхăт хушшинче вĕсем Петсаморан никель ытларах турттарса каясшăн. Нимĕçсем Петсамора ĕçлеме Норвегири рабочисене ирĕксĕр мобилизацилесе илсе кайнă, çавăн пекех тата хăйсен Германири ĕç отрячĕсене те илсе пынă.

А. А. Жданов юлташ Маннергейм президентпа тĕл пулни

ХЕЛЬСИНКИ, октябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Союзниксен Финляндири Контроль Комиссийĕн Председателĕ А. А. Жданов Финлянди Президенчĕпе Маннергеймпа пĕрремĕш хут тĕл пулса калаçнă. Калаçу 2 сехет çурă пынă. Калаçура Союзниксен Контроль Комиссийĕн Председателĕн Заместителĕ Савоненков генерал-лейтенант тата Финляндин Оборона Министрĕ Вальден генерал пулнă.

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, октябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет:

Хĕвеланăç Сербире Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем вăйлă çапăçнă хыççăн Бальево хулипе Белград хули хушшинчи çул çинчи тĕреклетнĕ паха пункта тытса илнĕ. Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем Обреновац хули еннелле малалла куçса пыраççĕ.

Черногорире тăшманăн Подгорица, Цетинье тата Грахово хулисенчи гарнизонĕсене çавăрса илнĕ.

Герцеговинăра тата Хĕвелтухăç Боснире хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Хорватипе Словенире тăшманăн çулйĕрĕсемпе транспортне пĕтерес тĕлĕшпе çапăçаççĕ.

РУЗВЕЛЬТĂН СУЙЛАВ УМЕН КАЛАНĂ ИККĔМĔШ САМАХĔ

ВАШИНГТОН, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт радиопа сăмах тухса каланă. Вăл пуринчен ытла демократсен партийĕн пĕтĕм çĕршывĕпе пулнă пухăвĕсене каланă. Рузвельт суйлавçăсене питĕ тĕплĕн шута илме чĕннĕ, çапла туни çитес чи паха суйлавсенче американецсен ытларах пайĕн шухăш-кăмăлĕсене лайăх палăртма пулăштăр, тенĕ. Рузвельт конгресри республиканецсене, суйлав кампанийĕнче çынсене «тĕрлĕ хăрушлăхпа» хăратма хăтланаканскерсене, хирĕç çирĕп каланă. Рузвельт вăрçă вăхăтĕнче граждансем валли тунă хĕсĕкрех условисене тăшмана çĕнтерне хыççăнах чакарма сăмах панă. Рузвельт малалла çапла каланă: американецсем Совет Союзĕн хастарлă халăхĕпе вăрçă вăхăтĕнче çеç мар, мирлĕ вăхăтра та союзлă пулнипе савăнаççĕ, тенĕ. Рузвельт çирĕп мир тăвас ĕçре мĕнпур союзниксене пĕр-пĕринпе питĕ таччăн сыхăнса, килĕштерсе ĕçлеме чĕннĕ.

АНГЛИ, АМЕРИКА ТАТА КИТАЙ ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕН ДУМБАРТОН-ОКСРИ КОНФЕРЕНЦИЙĔ ХĂЙЕН ĔÇĔСЕНЕ ТУСА ПĔТЕРНĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 7-мĕшĕнче Америка, Англи тата Китай представителĕсен Думбартон-Оксри конференцийĕ октябрĕн 7-мĕшĕнче хупăннă. Ăна хăрушсăрлăха сыхламалли пĕтĕм тĕнчери организаци тăвас ыйтупа пухнă пулнă. Америка, Англи тата Китай делегацийĕсен представителĕсем Стеттиниус, Галифакс тата Веллингтон Ку пĕрле çапла пĕлтернĕ:

«Пĕтĕм тĕнчери хăрушсăрлăха сыхласа тăмалли организаци тăвас ыйтупа хамăр хушăра пулнă калаçусем халь ăнăçлăн вĕçленчĕç».

Пĕлтерÿре малалла çапла каланă: «Калаçусем хăварт аталанса пыни Думбартон-Оксри калаçусен малтанхи тапхăрĕнче кирлĕ ĕçсем туса ирттернинчен, çавăн пекех тата çав ыйтупа виçĕ делегаци пĕрпĕрне меморандумсем çырса панинчен килчĕ. Çав калаçусем делегацисене хăйсен шухăшĕсене пĕтĕмпех тата уççăн каласа пама май пачĕç. Çав калаçусене пула вара мирпе хăрушсăрлăха сыхласа тăма кирлĕ пĕтĕм тĕнчери организацин пĕтĕмĕшле структурипе унăн механизмĕ пирки тĕрлĕ сĕнÿсем йышăннă. Виçĕ делегаци çав сĕнÿсене халь хăйсен правительствисене пĕлтереççĕ».

УЭНДЕЛЛ УИЛКИ ВИЛНĔ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхине, чĕре чирĕпе чирлесе, Уэнделл Уилки вилнĕ. Уэнделл Уилки США-ри республиканецсен партийĕн паллă деятелĕ пулнă. Ăна 1940 çулхи суйлавсенче республиканецсен партийĕ США президентне суйлама кандидата тăратнă. Уэнделл Уилки 1942 çулта Совет Союзне килсе кайнă.

КĔСКЕН

● Швейцари пур вăрçакан çĕршывсене те вăрçă япалисем яма чарса лартнă.

● Бендер-Шах хулинче (Иран) «Совет искусстви аслă Отечественнăй вăрçă кунĕсенче» ятлă выставка уçăлнă. (ТАСС).

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

ПАЯН
(октябрĕн 10-мĕшĕнче)
юлашки хут
«МОРСКОЙ ЯСТРЕБ»
ятлă саслă, илемлĕ фильм
кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.
Билетсем малтанах илсе хума юрать.
Касса ирхине 10 сехетрех ĕçлеме пуçлать.

Часах
«УЧИТЕЛЬ»
ятлă саслă, илемлĕ фильм
кăтартма тытăнаççĕ.

Чăваш АССР Ĕç резервĕсен управленийĕн Çĕмĕрлери 1-мĕш номерлĕ ремесло училищи (ăна 1-мĕш номер ФЗО шкулĕнчен тунă) ачасене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Ремесло училищинче икĕ çул вĕренмелле.

Училище слесарь-инструментальщиксене, оборудовани юсакан слесарьсене, столярсене, токарьсене, электромонтерсене вĕрентсе хатĕрлет.

Училищĕне 14—16 çула çитнĕ арçынсемпе хĕрсене, пуçламĕш шкултан вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ.

Училищĕне вĕренме кĕнĕ чухне çак документсем кирлĕ:

1. Паспорт е хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, 2) миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство е справка, 3) сывлăх пирки панă справка, 4) директор ячĕпе çырнă заявлени.

Училищĕне вĕренме илнисене общежитие вырнаçтараççĕ, выртса тăмалли вырăн параççĕ, кĕпе-йĕм, тумтир тата атă-пушмак параççĕ, кунне виçĕ хут апат çитереççĕ.

Училищĕре октябрĕн 15-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ.

Заявленисене çак адреспа çырмалла: гор. Шумерля, ул. Ленина, 1, Ремесленное училище № 1.

Колхоз председателĕпе унăн активĕ

Первомайски районри «Большевик» колхоз кăçалччен юлса пыракансен шутĕнче тăнă. Колхозниксем хушшинчи массăллă ăнлантарулă ĕç çителĕксĕррине пула кунта дисциплина япăхса кайнă пулнă. Колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса пырайман. Кăçалхи март уйăхĕнче çак колхоза ертсе пыма Отечественнăй вăрçă инвалидне Ф. Г. Гаврилов коммуниста суйланă.

«Большевик» колхоз пысăках мар. Унăн акмалли çĕр лаптăкĕ 353,5 гектар шутланать. Колхозра яланах ĕçлеме пултаракансем 152 çын, çул çитмен çамрăксем 12 çын. Ĕç лашисем 21 пуç пулнă.

Çак вăйпа Гаврилов юлташ ялхуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмпех ăнăçлăн ĕлкĕртсе пыма май пуррине курнă. Анчах та ĕç дисциплинине çирĕплетмесен, колхозри чи кирлĕ участоксенче малтанхи сÿрĕк çынсенех хăварсан, ĕçре пысăк чăрмавсем пуласси курăнсах тăнă.

Тырпул вырса пухма колхоз тĕплĕн хатĕрленнĕ. Чăн малтанах краççынпа ĕçлекен двигателе ĕçе янă. Двигательпе ĕçлеме вăрçă инвалидне Т. Г. Иванов юлташа уйăрса çирĕплетнĕ.

Колхозри шут ĕçне йĕркелес тесе, фронта хăй ирĕкĕпе кайса аманса таврăннă К. И. Хураськин юлташа счетовод пулса, иккĕмĕш группăри инвалида С. М. Ергунов юлташа учетчик пулса ĕçлеме уйăрнă. Çак юлташсем, тăрăшса ĕçлесе, колхозри шут ĕçне лайăх йĕркелесе янă, колхозниксен кашни ĕçкунне кĕнекесем çине вăхăтра çырса пынă, вара колхозниксен ĕçлес кăмăлĕ те ÿснĕ. Бригадир пулса ĕçлеме те пултаруллă хĕрарăма Васильева юлташа лартнă.

Колхозниксем хушшинчи ăнлантарулă ĕçе лайăхлатнă. Ку енĕпе вăрçăран йывăр аманса килнĕ А. К. Ильин юлташ хăйĕн пултарулăхне часах кăтартнă. Вăл çураки пуçлансанах кашни бригадăра стена хаçачĕ кăларассине организациленĕ. Пĕр бригадинче — «Çĕлтăр», тепĕр бригадинче «Стахановец» ятлă хаçатсем тухса тăнă. Унта малта пыракан колхозниксемпе колхозницăсен ĕçне çутатса пынă, начар ĕçлекенсепе, кахалсене пĕр хĕрхенмесĕр критикленĕ.

Çапла вара кĕске вăхăт хушшинчех 11 çынна колхозри ответлă ĕçсене уйăрса лартнă. Вĕсем пурте вăрçă вучĕ витĕр тухнă, ĕçлеме пултаракан çынсем пулнă. Çапла председатель хăй тавра колхоз активне пухса пĕтĕçтернĕ.

Тырă вырма тухсанах ĕç ĕлĕкхи пек мар, лайăххăрах пулса пыни палăрнă. Ыраша планпа 6 кунта вырса пĕтерме пăхнă пулсан, 5 кунта пĕр тăккаламасăр вырса пуçтарнă. Колхоз тыррине уйра та, итемре те 6 çын тĕплĕн хуралланă. Ыраш вырса пĕтернĕ хыççăнах тулăпа сĕлĕ пулса ĕлкĕрнĕ. Вĕсене икĕ жнейкăпа вырма тытăннă. Тĕштырăсене сентябрĕн малтанхи кунĕсенчех вырса пĕтернĕ. Тырă вырнă çĕрте ĕç нормине тултарса пыман çынсем пулманпа пĕрех. Уйрăм колхозниксемпе колхозницăсем кулленхи нормăна умай ирттерсе тултарнă. М. Красильникова, А. Убасева, И. Иванова юлташсем ĕç нормине 200—250-шар процент тултарса пынă. 70 çула çитнĕ И. Семенов юлташ тырă вырнă çĕрте те, авăн ĕçĕнче те вăйпитти çамрăксенчен юлман. Çакăн пек стахановецсем колхозра вуншарăн шутланаççĕ.

Колхозăн икĕ витнĕ итем. Унта кăнтăрла та, çĕрле те авăн çапнă. Çапла вара авăна сентябрь уйăхĕнчех çапса пĕтернĕ, государствăна та тырă парса татнă.

Колхоз председателĕ Гаврилов, вăрçă инваличĕ Иванов, счетовод Хураськин тата ытти юлташсем те, эпир канцеляринче ĕçлетпĕр тесе, тырă вырма, авăн çапма тухмасăр ларман. Çĕрле те вĕсем яланах колхозниксемпе пĕрле ĕçре пулнă.

12 гектар çинчи кантăра, 2 гектар çинчи йĕтĕне вăхăтра татса çапнă. Йĕтĕне çерем çине сарнă, кантăра шыва хунă.

Халиччен кунта кок-сагыз акса туман. Кăçал вара кашни гектартан 12-шер центнер кок-сагыз тымарне, 10-шар килограмм вăрлăхне пухса илнĕ. Пысăк тухăçлă кок-сагыз туса илсе государствăна панăшăн колхоз 25 килограмм супăнь, 15 метр сатин, 40 мăшăр чăлха, 10 тутăр тата ытти тĕрлĕ таварсем те нумай илнĕ. Кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен Авсеева юлташ звенин ку енĕпе ĕнтĕ пысăк опыт пур.

Кăçал колхоз 15 гектара яхăн çĕрулми лартнă, ăна çийĕнчех кăларса государствăна панă; вăрлăхпа пĕрлешÿллĕ апат валли уйăрнă çĕрулмине шăтăка тирпейлесе хунă. Колхозра пур ĕçе те уйрăм сдельщинăпа туса пыраççĕ.

Вăрлăх участокĕ çинче мĕн çуркуннерен пех уйрăм звено ĕçленĕ. Çав звенона пысăк опытлă ватă колхозник А. Ванисов юлташ ертсе пырать.

— Вăрлăх участокĕ çинче тырă касса усăлмалла мар пулчĕ, — теççĕ колхозниксем. Ку тĕрĕс те ĕнтĕ. Вăрлăхлăх тулă, сĕлĕ, çавăн пекех ыраш та, вăтамран шутласан, кашни гектартан 40-шер центнера çити тухать. Çак участокри тырра пĕтĕмпех уйрăм вырса çапнă. Халĕ вара пĕтĕм вăрлăха тĕплĕн сортласа тасатса, акт тăрăх кладовщик аллине панă.

Колхозниксемпе колхозницăсем ĕçлени сая каймарĕ, колхоз кашни гектартан çуртыррисем вăтам шутпа 17-шер центнер пухса илнĕ.

Колхоз председателĕ Гаврилов юлташ колхозри чи кирлĕ ĕçсем тĕлĕшпе яланах опытлă, ватă колхозниксемпе канашлать. Кунта кăçал 12 гектар вир акнă пулнă. Каярах акнине пула вир шăтса тухиччех çумкурăк кашласа ÿсме тытăннă. Ревизи комисси председателĕ Михайлова юлташ: вир шăтас çук, ăна çумлаттарса ахалех ĕçкунĕ сая яратпăр, тенĕ. Ватă колхозниксемпе канашланă хыççăн, Гаврилов юлташ вир акнă вырăна пĕтĕмпех çумлаттарса тасатнă. Çакăн хыççăн вир лайăх шăтнă, вăйлăн ÿсме тытăннă. Вăл кашни гектартан 70—80 пăт тухать, теççĕ колхозниксем.

Колхозра халĕ тымар-çимĕçсене пухаççĕ, кĕрхи çĕртме тăваççĕ. Кĕрхи çĕртмене кунта МТС тракторĕсемсĕр, хăйсен вăйĕпех сухаласа пĕтерме шутлаççĕ.

«Большевик» колхоз государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне тултарнă. Выльăхсем валли апат çителĕклĕ хатĕрленĕ, выльăх апачĕн çулталăклăх балансне те тунă. Сăмахран, кашни лаша пуçне 10 центнер тĕштырă, 10 центнер утă, 200 центнер çуртырри улăмĕ, 10 центнер ыраш улăмĕ, 4 центнер арпа уйăрнă. Çавăн пекех ĕнесемпе сурăхсем тата сыснасем валли те пур тĕрлĕ апат та шутласа, уйăрса хунă. Витесемпе ферма çурчĕсене ăшă каймалла мар юсанă.

Çапла вара колхоз лайăх е япăх ĕçлесси чи малтан колхоз руководителĕсенчен килнине «Большевик» колхоза ертсе пыракансем тепĕр хут кăтартса пачĕç. Фронтовик Гаврилов юлташ ертсе пынипе «Большевик» колхоз районра малти вырăна тухрĕ. Первомайски районри нумай колхозсем «Большевик» колхозпа унăн руководителĕнчен Гаврилов юлташран нумай вĕренме пултараççĕ.

Районри партипе совет тата çĕрĕç органĕсем «Большевик» колхозăн опытне ытти колхозсене сарма тивĕçлĕ.

В. ЯСТРЕБОВ.
Первомайское.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительне секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00734. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. 4. Тираж 16.000 экз.